Вениамин Тимаков

**Çĕнелнĕ çĕршыв**

Илемлĕ те вăй-халлă эс паян,
Тăван республикăм – Чăваш çĕршывĕ.
Тус-йышупа малашлăха каян
Нихçанхинчен ят-сумлăн та сып-сыввăн.

Çырмаллă енсенче çӳренĕ май
Чунра сăрланчĕ санăн пурнăç йĕрĕ.
Эп шухăшлатăп пăлханса пĕрмай:
Çĕнелчĕ аттесен сăваплă çĕрĕ. ...

Ял хĕрринчи пĕр пĕчĕкçĕ урам.
Тен, çирĕме те çитеймест кил шучĕ.
Çавах та халăх пурнăçĕ унра
Пур сăнĕпе те, ĕçĕпе те юлчĕ.

Ак çывăхра тем анлăш тырпусси –
Мĕнчул ăру, мĕнчул этем кунçулĕ.
Халь çӳллĕ кранăн хурçă тараси
Хăлаçланать унта ир-каç хĕрӳллĕн.

Çак улăпа çĕклет пек çурăмпа
Кунта кун курнă ăрусен хавалĕ.
Ват тимĕрçсем хăварнă сулăмпа
Янрать пек хулара завод «сунталĕ».

Пин çăлкуçран пĕр юханшыв пулать –
Арман урапине çавăраканĕ,
Пин юханшыв пĕр măн шыва тулать –
Этемшĕн ГЭС пулса тăрăшаканĕ.

Кашни çынран пуçтарăнать çапла
Ман халăхăн ят-сумĕпе хăвачĕ.
Кашни урам, кашни ялпа хула
Ĕçченлĕхне илсе, çĕршыв вăйланчĕ.

Телейлĕ самана лăпкать сана,
Тăван республикăм – Чăваш çĕршывĕ.
Тус-йышупа ĕçӳ ялан ăнать,
Малашлăха утан маттуррăн, сыввăн.

*Тимаков, В. Çĕнелнĕ çĕршыв / В. Тимаков // Тăван Атăл. – 1980. – №6. – С. 58.*